Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

60-61 (7377-78) №№ ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи июлĕн (утă) 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Ыран – Суту-илӳ ĕçченĕсен кунĕ

**СУТУ-ИЛӲН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире професси уявĕпе – Суту-илӳ ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе саламлатăп.**

Мĕн авалтанах суту-илӳ сфери çĕршывăн экономика аталанăвĕ çине пысăк витĕм кӳнĕ. Рынок тапхăрĕнче унăн пĕлтерĕшĕ татах та пысăк. Суту-илӳ предприятийĕсен ĕçĕнчен районăн финанспа экономика бази пуянланасси, социаллă инфраструктура аталанасси, çынсен пурнăç условийĕсем лайăхланасси нумай килет.

Кашни çулах суту-илӳ ĕçченĕсен тавар туянакансене пăхас культура ӳссе, магазинсенче тавар ассортиментчĕ те пуянланса пырать.

Малашне те суту-илӳре вăй хуракансем умри йывăрлăхсене çĕнтерсе хăйсен тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласса шанса тăратăп.

Уяв ячĕпе саламласа çирĕп сывлăх, ăнăçусем сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**



***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан (сулахайран сылтăмалла) Алина Владимировна Оньковапа Роза Валентиновна Сютрукова Муркаш райповĕнче çĕнĕ çынсем мар: сутуçăра Алина 15 çул вăй хурать, Роза – 25 çул. Çак хушăра хăйсен ĕçĕнче пуян опыт пухнă сутуçăсем паян райцентрти Зоя Николаевна Малыгина (райпори ĕç стажĕ 28 çул) ертсе пыракан “Центральный” магазинта ĕçлеççĕ. Магазин уйăхсерен пĕр миллион ытлалăх тавар сутнинче вĕсен тӳпи те пуррине тавар туянакансем ал тупанĕ çинчи пек кураççĕ. Çăкăр-тăвар хирĕçле тенине шута илсе сутуçăсем те тавар ассортиментне çĕнетсех тăраççĕ, тавар туянаканпа тараватлă пулассине иккĕмĕш вырăна хăвармаççĕ.***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Центральная избирательная комиссия**
**Чувашской Республики**
**Постановление**

**13.07.2006г. № 81/417-III**

**г. Чебокасры**

**О НАЗНАЧЕНИИ ЧЛЕНОВ ИЗБИРАТЕЛЬНОЙ КОМИССИИ С ПРАВОМ РЕШАЮЩЕГО ГОЛОСА**

Рассмотрев предложения по кандидатурам в состав Моргаушской территориальной избирательной комиссии, в соответствии со статьей 26 Федерального закона “Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации”, статьей 21 Закона Чувашской Республики “О выборах депутатов Государственного Совета Чувашской Республики” и постановлением Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики № 78/373-III от 06.06.2006 года Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики постановляет:

1. Назначить членами Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса:

1) Галкина Сергея Вячеславовича – 1970 года рождения, образование высшее, юрисконсульта Моргаушского районного потребительского общества, предложенного в состав комиссии собранием избирателей;

2) Григорьеву Федосию Валерияновну – 1969 года рождения, образование высшее, главного бухгалтера МУП “Управляющая компания ЖКХ” Моргаушского района, предложенную в состав комиссии собранием избирателей;

3) Корнееву Алевтину Фирсовну – 1958 года рождения, образование высшее, безработную, предложенную в состав комиссии собранием избирателей;

4) Тарасову Лилию Юрьевну – 1966 года рождения, образование высшее, начальника отдела организационно-кадрового, правового обеспечения и по работе с органами местного самоуправления администрации Моргаушского района, предложенную в состав комиссии Чувашским региональным отделением Всероссийской политической партии “Единая Россия”.

2. Направить настоящее постановление в средства массовой информации для опубликования.

**Председатель Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики**
**Л.Н. ЛИННИК.**

**Секретарь Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики**
**А.И. ЦВЕТКОВ.**

## ПАЯНХИ НОМЕРТЕ


**2 стр. - Çыру йĕрĕпе.**
**3 - 6 стр. - Депутатсен районти Пухăвĕн июлĕн 13-мĕшĕнчи ларăвĕн йышăнăвĕсем.**
**7 - 8 стр. - Пай çĕрĕсен хуçисен пĕлтерĕвĕсем (заказ шучĕпе пичетленет).**
**9 стр. - Телевиденин çитес эрнелĕх программи.**
**10 стр. - Паттăрлăх.**


## Раççейре

# Пенсионерсене инвалидсемпе танлаштарма пултарĕç

Çăмăллăхсемпе усă куракансене эмелсемпе тивĕçтерсе тăмалли программăна пысăк улшăнусем кĕртес шутлă. Кун пирки Раççей сывлăх надзорĕн ертӳçи Рамил Хабриев пĕлтернĕ.

Эмелсемпе хушса тивĕçтерсе тăмалли программăна, инвалидсемпе пĕрлех, пур пенсионерсене те кĕртме пултарасси паллă темелле. Ку ыйтăва татса парас тĕлĕшпе РФ Сывлăха сыхлас тата социаллă аталану министерствипе Раççей сывлăх надзорĕнче ĕçсем пыраççĕ ĕнтĕ. Паллă ĕнтĕ, уйрăм ӳсĕм тапхăрне çитнĕ пур граждансене те эмелсемпе тивĕçтерессипе каякан тăкаксене патшалăх хăйĕн çине илессине сывлăха сыхлассипе социаллă аталану министрĕ Михаил Зурабов çулталăк каяллах асăннăччĕ.

Çĕнĕлĕхĕн логики çавăн пек: пенсие тухнă тапхăра ытларахăшĕн тĕрлĕрен хронически чир-чĕр сахал мар пуçтарăнать. Специалистсем палăртнă тăрăх, «пĕтĕмĕшле чир-чĕр» енĕпе вĕсене инвалидноç пама май пур. Çавăнпах ĕнтĕ инвалидсене эмелсемпе хушса тивĕçтерсе тăмалли Федераллă программăна кĕртнĕренпе инвалидноçа тухма документсем хатĕрлекенсен йышĕ палăрмаллах ӳснĕ.

## Республикăра

# Çар комиссариачĕсем отставкăна каяççĕ

Çар йышĕ чакать, апла пулсан çар комиссариачĕсен шучĕ те чакать. Йышăннă тăрăх, республикăра кашни пиллĕкмĕш çар комиссариатне пĕтермелле.

Кун пек шăпа чи малтанах Шупашкар хулинчи Калинински районĕнчи çар комиссариатне пырса тивнĕ. Унăн функцийĕсем Ленински районĕнчи çар комиссариачĕ çине куçаççĕ. Реформа ытларах яллă районсенчи çар комиссариачĕсене пырса тивет. Пирĕн республикăра кăна та мар. Сăлтавне оборона министрĕ С. Иванов çапла палăртнă: «Çара илмелли çамрăксен шучĕ пĕчĕк, вĕсенче вара çар комиссариачĕсем тытса тăма экономика тĕлĕшпе нимĕнле кирлĕлĕх те çук».

Должноççăр тăрса юлакан офицерсемпе прапорщиксене службăн çĕнĕ вырăнĕсем кĕтеççĕ, выслугăпа пенсие тухма пултаракансене вара тивĕçлĕ кану кĕтет.

Каланă тăрăх, çар комиссариачĕсене тытса тăма каякан тăкаксем çапла вара 20 процент чакмалла.

## Юбилей

### *Саламлатпăр*



Июлĕн 22-мĕшĕнче Сарчак ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă çыннăмăра **Александр Никитич ВОЛКОВА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн пуç тайса, хисеплесе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Эпир сана чун-чĕререн юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Утас кун-çулу такăр, ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп, пурнăçу тулăх пултăр.

**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, хăтитăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**

---

Пирĕн юратнă аттепе аннене – Тивĕш ялĕнче пурăнакан **Евдокия Андреевнапа Аркадий Аркадьевич ФЕДОТОВСЕНЕ** ылтăн туй ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.

Эпир сире хисеплетпĕр, сирĕнпе мухтанатпăр, эсир пурришĕн савăнатпăр.

Канлĕ ватлăх, çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

## Кĕскен

# Министерство кунĕнчен

Утă уйăхĕн 18-мĕшĕнче пирĕн районта Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин тата патшалăх ветеринари службин кунĕ иртрĕ. Килнĕ хăнасем çак кун икĕ ушкăна пайланса район выльăх апачĕ хатĕрлессипе тата выльăх-чĕрлĕх отрасльне аталантарассипе епле ĕçлесе пынипе паллашрĕç. Пĕр ушкăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов хăй ертсе çӳрерĕ, иккĕмĕш ушкăнне – райадминистраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А. Иванов. Министерство кунне килнисем хушшинче ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ В. Александров, министерствăри вĕрентӳ тата кадрсен политикин пайĕн пуçлăхĕ Г. Таланцева, патшалăх ветеринари службин ертӳçи В.Тихонов, инноваципе çĕр ĕç пайĕн пуçлăхĕ Г. Тихонов, инноваципе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн ăратлăхĕпе ĕçлес пай ертӳçи В. Герасимов пулчĕç. Вĕсем выльăх фермисене тата “симĕс ĕç çи” пынă хирсене çитсе курнă хыççăн район кунта вăхăтлă ĕçлесе пынине палăртрĕç. Хăнасем çавăн пекех хуçалăхсем вырмана епле хатĕрленнипе те кăсăкланчĕç.

Министерство кунне хутшăннисем çак кун районти кашни хуçалăха майлах çитсе курчĕç.

**А. ПЕТРОВ.**



**Сăн ӳкерчĕкре: Министерство кунне хутшăнакансем «Свобода» хуçалăхăн тырă пуссинче.**

## Симĕс ĕç çи

**РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ, КĔРХИ КУЛЬТУРĂСЕМ АКМА ÇĔР ХАТĔРЛЕС ĔÇСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ (ИЮЛĔН 21–МĔШĔ ТĔЛНЕ)**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Нумай çул ӳсекен курăксене çулнă. 2. Утă типĕтсе хатĕрленĕ. 3. Сенаж хывнă. 4. Силос хывнă (процентпа). 5. Кĕрхи культурăсем акма çĕр хатĕрленĕ (гектарпа).**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 95 | 82 | 67 | | 20 |
| “Волга” | 96 | 78 | 0 | | 130 |
| “Восток” | 100 | 140 | 71 | | 14 |
| “Герой” | 82 | 44 | 83 | 96 | |
| ЗАО “Агро-Урожай” | 100 | 100 | | | |
| К. Иванов яч. хис. | 91 | 36 | 60 | 55 | 85 |
| Ильич яч. хис. | 98 | 72 | 123 | 100 | 10 |
| “Колос” | 71 | | | | 50 |
| Ленин яч. хис. | 96 | 93 | 310 | 0 | 100 |
| “Лидер” | 89 | 43 | 75 | 0 | 20 |
| ГУП ЧР “ПФ “Моргаушская” | 200 | | | | 20 |
| “Нива” | 87 | 53 | 0 | | 10 |
| “Оринино” | 98 | 81 | 177 | 90 | 100 |
| “Передовик” | 36 | 28 | 43 | | 188 |
| “Свобода” | 100 | 42 | 59 | | |
| “Сеятель” | 58 | 58 | 0 | | |
| Суворов яч. хис. | 100 | 59 | 44 | | 230 |
| ООО АФ “Рассвет” | 74 | 38 | | 54 | 250 |
| ОАО АФ “Нива” | 71 | | | | |
| “Ударник” | 100 | 38 | 145 | 5 | 150 |
| “Хлебороб” | 74 | 44 | 12 | | 85 |
| Чапаев яч. хис. | 83 | 75 | | 0 | 20 |
| “Чемеево” | 100 | 77 | | 59 | |
| Чкалов яч. хис. | 94 | 96 | 0 | 69 | 70 |
| КФХ Михайлов А.Н. | 82 | 90 | 0 | | 270 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **85** | **57** | **68** | **51** | **1822** |

**Паянхи куна районти хуçалăхсенче выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем тивĕçлĕ шайра теме çук. Акă «Восток» хуçалăхра уяр çанталăкпа усă курса çак вăхăта нумай çул ӳсекен курăксене пĕтĕм лаптăк çинче çулса пĕтерсе хĕл кунĕсем валли 140 процент утă янтăлама ĕлкĕрнĕ пулсан, «Передовик» хуçалăхра çулмалли лаптăк татах 569 гектар. Кирлĕ утăн 28 процентне кăна хатĕрленĕ. Кăтартусем 100 процента çитесси иккĕлентерет.**

**Вăхăт иртет, курăксен масси хытса каять пулин те, «Волга», «Нива», «Сеятель», Михайлов А.Н. хуçалăхсенче сенаж хывас ĕçе тытăнман та.**

**Кĕр акиирттерме çĕр хатĕрлесси пирки те шутлас пулать. 7 хуçалăхра ку ĕçе тытăнман-ха.**


**Уважаемые дамы и господа!**

С 1 июля 2006 года в соответствии с Законом РФ “О связи” все входящие звонки на всех тарифных планах ЗАО “Шупашкар-GSM” становятся бесплатными.

Также доводим до Вашего сведения, что звонки со стационарных телефонов на мобильные телефоны ЗАО “Шупашкар-GSM” с городской нумерацией не будут тарифицироваться до 01.01.2007 г. Таким образом, звонки на мобильные телефоны с прямым (городским) номером будут бесплатными не только для принимающей, но и вызывающей стороны.

В связи с этим особую актуальность приобретают мобильные телефоны с городской нумерацией, так как это становится выгодным не только самим владельцам, но их партнерам.

ЗАО “Шупашкар-GSM” предлагает Вам и возглавляемой Вами организации подключение на тарифный план “Формула успеха” с городской или федеральной нумерацией.

**Генеральный директор К.Я. ВОЛКОВ.**

СМАРТС

Лицензия №9156 ГК РФ по связи и информатизации